24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 ДЕКАБРЬ 12 ЭРНЕКУН 293 (6008) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ЧĂВАШ КОММУНИ

ТĂШМАНА СЫВЛĂШ ÇАВĂРМА ПАМАСĂР ÇАПАР!

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенчен хавхалантаракан, хаваслă хыпарсем килеççĕ. Паян Совет Информаци Бюровĕ Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнчи Хĕрлĕ Çаран паттăр войскисем, генерал-лейтенант Костенко командир пулса ертсе пынипе, немĕçсен фашистла войскисене çĕмĕрсе тăкса тăшман тытса илнĕ Елец хулине каялла илни çинчен пĕлтерчĕ. Кунта немĕçсен, малтанласа шутланă тăрăхах, 12 пин çын вилнĕ тата аманнă. Пирĕн чаçсем витех те нумай трофейăсем тытса илнĕ.

Ростов хыççăн—Тихвин, Тихвин хыççăн—Елец. Немĕçсен фашистла пусмăрĕнчен çăлса кăларнă тăван куласемпе ялсем çине совет çĕршывĕн мухтавлă ялавне çирĕплетсе лартакан хăйĕн паттăр воинĕсене тăван çĕршыв хĕрĕллĕн саламлать. Совет войскисем пуçарулăха ытларах та ытларах хăйсен аллине илсе пыраççĕ, тăшмана çине-çинех вăйлăн çапса арканаççĕ. Сталин юлташ Германипе Совет Союзĕ хушшинчи вăрçăн иртнĕ тапхăрĕнче «Совет Союзĕпе танлаштарсан, Германи чылаях вăйсăрланчĕ, унăн çыннисен резервĕ ĕнтĕ пĕтсе пырать, Совет Союзăн резервĕсем вара халĕ çеç туллин ĕçе кĕрсе пыраççĕ», тесе каланин тĕрĕслĕхне фактсем хăйсемех ĕнтĕ мĕнпур чăнлăхпа, никам сирсе пытармалла марах кăтартса параççĕ. Пирĕн вăйсем ӳссе пыраççĕ, тăшманăн вăйĕсем чакса пыраççĕ.

Тăшманăн вăйĕсем чакаççĕ. Анчах та вĕсем иксĕлсе пĕтмен-ха. Пире хирĕç фашизм гитлерла Германипе темиçе çул хушши пухса хатĕрленĕ хăйĕн вăрçă машинине пĕтĕмпе пекех янине тата çак вăрçă машинине пулăшма Гитлер хăйĕн вассалĕсен войскисемпе техникине чĕнсе илнине пĕр минутлăха та манма кирлĕ мар. Çакă çавтери пысăк вăрçă машинине пĕтерсе тăкас тесен, питĕ нумай вăй хурса паттăрăн кĕрешмелле. Çитĕнӳсем пирки пуç çавăрăнса каймалла мар! Хальхи вăхăтра, нихăçанхинчен те ытларах, тĕрĕс те тĕплĕн шутласа хуни, обстановкăна лайăх пĕлни, хамăран вăйсене тĕрĕс шутласа хуни тата тăшманăн мĕнпур вăйĕсене шута илни кирлĕ.

Тăшман хăйĕн ăнăçлăр ĕçĕсен мĕнпур сăлтавĕсене вырăс çĕршывĕнчи сивĕ хĕл çине, вырăссен шартлама сиввисем çине йăвантарма тăрăшать. Анчах та нимĕçсен ĕçĕсем кун пек ăнăçсăр пулса пынишĕн айăпли, Гитлерăн ют çĕрсене тытса илес вăрă-хурахла планĕсене пăсса тăкаканни вăл—хĕл мар, Хĕрлĕ Çаран ӳссе пыракан вăйĕ пулнине тăшман питĕ лайăх пĕлет. Паллах ĕнтĕ, тăшман, çиçĕм пек хăвăрт çĕнтерӳ тума шутламăскер, хĕле хатĕрленмен. Пирĕн çĕршыври хĕллехи шартлама сивĕсемпе асăр-пилĕр çил-тăмансене хаваласа хамăран союзник шутне илеттĕр. Хĕрлĕ Çаран пирĕн çĕршывăн хĕллехи хаяр условийĕсем туса паракан уйрăмлăхсемпе усă курмалла. Хĕл тăшмана халăх пурăнакан вырăнсем патнелле хăвалать, пирĕн ăна унтан сивĕ çĕре хăваласа кăлармалла. Антив, немĕç захватчикĕсем, юнлă вăрă-хурахсем шăнса вилсе кĕрт аĕне пулччăр! Вĕсене кунта никам та чĕнмен. Хĕл немĕçсене тылпа сыхăну тытассине йывăрлатать, вĕсен коммуникацийĕсене пăсса пырать. Хĕрлĕ Çаран, пирĕн паттăр партизансен хĕллехи условисемпе анлăнрах усă курмалла, немĕç войскисем хушшинчи сыхăнăва аркатмалла, вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрмалла, вĕсене сивĕпе çеç те мар, тата выçăпа та, боеприпассемсĕр тăратса хăварса та аптратмалла.

Мĕнпур фронт тăршшĕпех хаяр çапăçусем пыраççĕ. Хĕрлĕ Çар çак фронтăн нумай участокĕсенче тăшмана хĕсет, совет хулисемпе ялĕсене тăшманран турта-турта илет. Анчах та тăшмана хĕсни çеç çителĕксĕр-ха. «Немĕçсем пĕтерсе тăкмалли вăрçă туянаспăн пулсан, вĕсем ăна туянĕç»,—терĕ Сталин юлташ. Пирĕн çĕршыва килсе кĕнĕ Гитлерăн пĕр бандичĕ те, пирĕн патăмăртан чĕррĕн тухса хаймалла мар. Гитлерăн çарне пирĕн хамăр çĕршывăн анлăшĕнче çĕре чиксе пытармалла, ăна пытаратпăрах. Ку вăрă-хурахла çар хăйĕн вилĕмне совет çĕршывĕ çинче тупĕ.

Тăшманăн аллинчен унăн вилĕм саракан техникине çапса ӳкермелле. Эпир тытса илнĕ трофейăсен хисепĕ ӳссех пырать, анчах та ку хисеп татах та пысăкрах пулмалла. Пирĕн задача—тăшманăн чĕрĕ вăйне пĕтерсе тăкасси, техникине тытса илесси, тытса илме май килмесен—пĕтерсе тăкасси пулать. Гитлер çарне немĕçсен производство машини тултарса пымалла марах çавтери пысăк çухатусем кӳмелле.

Немĕç оккупанчĕсене нимĕн чухлĕ те шеллесе тăмалла мар, тăшмана пĕр самант та сывлăш çавăрма памалла мар. Тăшмана пĕр хĕрхенмесĕр тата тăшах çапса пымалла, ăна каялла çавăрăнса пăхма ирĕк памасăрах хăвалламалла, ăна çапăçтармалла, нимĕн хăвармиех аркатса тăкмалла—пирĕн чи лайăх чаçсем хăйсен умне лартнă задача çакăн пек ĕнтĕ. Çак задачăна мĕнпур Хĕрлĕ Çаран йышăнса илмелле.

Пурнăç пире çакна кăтартса пачĕ: Хĕрлĕ Çар тата мĕнпур совет халăхĕ пурăнса ирттернĕ мĕнпур инкек-синкек ахаль иртсе каймарĕ. Пирĕн çар питĕ пысăк боевой опыт илчĕ. Вăл хаярран хирĕç тăма çеç те мар, тата тăшмана çапса аркатмалла наступленийĕпе операцисем тума та вĕренсе çитрĕ. Çак боевой опыта пур çĕрте те, унпа Ростов сывăхĕнче, Тихвин патĕнче, Елец патĕнче усă курнă пекех, ăнăçлан усă курмалла. Тихвин патĕнче Шмидт генералăн группине пĕтĕмпех аркатса тăкнă. Чĕрĕ юлнă немĕç салтакĕсем хăйсен хĕçпăталне пăрахсах, нимĕне пĕлмесĕр тарнă. Анчах тарнисенчен те нумайĕшĕ хăйсен чаçĕсене çитеймĕç, çитсен те—çарамас, çара уран, пыйтăскерсем кăна çитĕç те, хăйсен юлташĕсене чĕрĕ юлнă гитлерла захватчиксенчен кашниех çакăн пек пулма пултарнине кăтартса парĕç.

Немĕçсен фашистла кĕтĕвне çĕнтерекенни никам та сукки çинчен калакан юмаха пирĕн Хĕрлĕ Çар тахçанах аркатса тăкрĕ. Вăл мухтанчăк немĕçсен фашистла çарне пырса çапма çеç мар, вĕсене организацилемсе чакма памасăр тартма çеç те мар, тата Гитлерăн çарату çарне чаçĕ-чаçĕпех пĕтерсе тăкма та вĕренсе çитрĕ. Хĕрлĕ Çар тăшмана пырса çапнисем шăпах çакăн пек ĕнтĕ, тата вĕсем çакăн пек çеç пулмалла.

Тăшман Кĕрлĕ Çаран вăйĕ ӳссе пынине сисет. Пирĕн çар çĕнтерни хăйне мĕнле инкек кӳме пултарнине Гитлер пĕлет. Çавăнпа та вăл тата унăн генералĕсем пирĕн чаçсен наступленине тытса чарас тесе темĕн тума та хатĕр. Малашне халĕ татах та йывăр та хаяр кĕрешӳсем пуласси курăнса тăрать. Мĕнпур вăя пĕтĕм тĕнче курайман пусмăрçăсене, Гитлер бандичĕсене пĕтерес ĕçе парар!

Немĕç оккупанчĕсене — вилĕм!

Тăшмана тĕппипех çĕнтериччен—малалла!

(«ПРАВДА», декабрĕн 11-мĕшĕнчи уместатья).

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партин Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Советĕнчен

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партин Центральный Комитечĕ тата ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ большевикла партин ватă деятелĕ, совет государствин паллă строителĕсенчен пĕри, ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн Заместителĕ тата Грузин ССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ ФИЛИПП ИЕСЕЕВИЧ МАХАРАДЗЕ вилни çинчен хурланса пĕлтерет.

ПĔТĔМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (БОЛЬШЕВИКСЕН) ПАРТИН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ.

ССР СОЮЗĔН ХАЛĂХ КОМИССАРĔСЕН СОВЕЧĔ.

ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕнчен

ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ совет государствин паллă деятелĕсенчен пĕри, ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн Заместителĕ тата Грузин ССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ ФИЛИПП ИЕСЕЕВИЧ МАХАРАДЗЕ вилни çинчен тарăнăн хурланса пĕлтерет.

ССР СОЮЗĔН ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔ.

Литвинов юлташа Рузвельт йышăннă

ВАШИНГТОН, декабрĕн 10-мĕш. (ТАСС). ССР Союзĕн Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй посолне М. Литвинов юлташа Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕ йышăннă. Литвинов юлташ президента хăйĕн верительнăй грамотисене панă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 10-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 10-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă. Хĕвеланăç тата Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕсен хăшпĕр участокĕсенче пирĕн чаçсем малалла кӳçса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Декабрĕн 9-мĕшĕнче немĕçсенне 7 самолет пĕтерсе тăкнă.

* * *

Декабрĕн 9-мĕшĕнче пирĕн авиаци немĕçсен 14 танкне, войскăсемпе грузсем çурттарса пыракан 620 автомашинине, 20 полевой тата зенитнăй орудине, вĕсен прислугисемпе пĕрле, боеприпассем çурттарса пыракан 280 лавне ытла пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, тăшман пехотине пĕр полк ытла вĕлерсе пĕтернĕ тата сапаласа янă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен Люлишенко юлташăн чаçĕсем икĕ кун хушшинчи çапăçусенче, немĕçсене халăх пурăнакан темиçе пунктран хăваласа кăларса, противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 2800 çынна вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн боецсем тытса илнĕ трофейăсем шутĕнче—7 танк, 12 йывăр оруди, танксене хирĕç пемелли 18 оруди, 200 грузовой тата 12 çăмăл автомашина, 80 пулемет тата 100 автомат.

Фронтăн тепĕр участокĕнче Кузнецов юлташăн боецĕсем пĕр кун хушшинчи çапăçусенче 40 яла ытла фашистла захватчиксенчен туртса илсе ирĕке кăларнă, немĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 2000 çынна яхăн вĕлерсе пĕтернĕ тата 75 танк, 200 автомашина, 112 мотоцикл, боеприпассен икĕ складне, орудисемпе пулеметсем тата автоматсем нумай тытса илнĕ.

Ленинград фронтĕнче кĕрешекен Корсаков юлташăн авиачăсĕнчи летчиксем темиçе кун хушшинчи çапăçусенче немĕçсен боеприпассем тиенĕ 70 автомашинине, 10 полевой орудине, зенитнăй пулеметсен 14 точкине пĕтерсе тăкнă, горючи базине взрыв туса сирпĕнтернĕ тата противникăн пехотине 4 ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Немĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пынă хаяр çапăçура старший сержантăн Бондаревăн пулеметнăй расчечĕ стройран тухнă пулнă. Аманнă Бондарев юлташ хăйĕн пулеметчĕ патĕнче пĕчченех тăрса юлнă. Фашистсем, миномĕтсенчен вăйлăн персе тăнипе усă курса, паттăр пулеметчик йышăнса тăракан позици çине автоматчиксен взводне янă. Бондарев юлташ, фашистсене тăвăллă вут-çулăмпа кĕтсе илсе, немĕçсен взводне пĕтĕмпех пекех пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнчен виçĕ автоматчик кăна тарса ĕлкĕрме пултарнă.

* * *

Х. юлташăн партизанла отрячĕ, Мускав облаçĕн немĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, фашистла захватчиксене хирĕç ăнăçлăн çапăçать. Çулсенчен пĕрин çинче отрядри боец С. юлташ танксене хирĕç пемелли гранатăпа немĕçсен танкне тата унăн экипажне пĕтерсе тăкнă. Часах çул çинче немĕçсен штаб машини курăнса кайнă. Партизансем автомобильсем çине гранатăсем вăркăнтарнă, машина çинче ларакан офицерсене пере-пере вĕлернĕ.

Çак кунсенче Б. тата С. партизансем разведкăна кайнă пулнă. Вĕсене хирĕç немĕçсен икĕ офицерĕ тĕл пулнă. Фашистсем С. партизана уринчи çăматтисене хывма хушнă. С. партизан, хăйĕн çăматти тăвăр пек туса кăтартса, ăна ерипен хывма пуçланă. Офицер вара партизан çине персе янă та ăна амантнă. Çав самантрах Б. партизан иккĕмĕш офицер çине персе ярса ăна вĕлерсе пăрахнă. Тарма пуçланă тепĕр офицерĕ хыççăн аманнă С. партизан, хăйĕн суранне аллипе тытса, чупма тытăнă, офицера персе амантнă. Фашист çаплах каялла çавăрăна-çавăрăна пенĕ. С. партизан вара офицер патне сывăхах пынă та ăна тӳрех персе вĕлернĕ. Çак вăхăтра халăх пурăнакан пункт енчен немĕçсем партизансем çине вăйлăн пеме пуçланă. Мухтавлă патриотсем, офицерсем çумĕнчен документсемпе хĕçпăшалсене илсе, вăрмана кĕрсе пытаннă.

Çулсем çинче засадăсем туса, партизансем немĕçсен связисчĕсене, грузовой машинисене тата лавĕсене пĕтере-пĕтере тăкаççĕ. Партизансен отрячĕ тăшманăн продовольстви турттарса пыракан обозĕ çине ăнăçлăн пырса тапăннă. Немĕçсен хуралне вĕлерсе пĕтерсе, партизансем грузăн пĕр пайне хăйсемпе пĕрле илнĕ те, ыттине пĕтерсе тăкнă. Темиçе кун каярах партизансен отрячĕ фашистсен çĕр çине ирĕксĕр анса ларнă самолетне пĕтерсе тăкнă. Юлашки вăхăтра кăна Х. юлташăн отрядĕнчи партизансем немĕçсен 40 салтакне тата 11 офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Хĕрлĕ Çар чаçĕсен командованийĕпе çыхăну тытса, мухтавлă совет патриочĕсем фашистсен артиллери складне, радиостанцине пĕтерсе тăкма тата противникăн 35 самолечĕ ларакан аэродромне çапса аркатма пулăшнă.

* * *

Немĕçсен фашистла войскисен Мускав патĕнчи ĕçĕсем ăнăçсăр пулни немĕç салтакĕсене питех те шиклентерсе ӳкернĕ. 10-мĕш танковăй дивизири 86-мĕш мотополкăн 6-мĕш ротинчи Вилли Герберг салтак çапла каласа панă: «Юлашки вăхăтра 10-мĕш танковăй дивизири 6-мĕш ротăра пĕтĕмпе те 20 çын кăна тăрса юлнă, 2-мĕш батальонри 1-мĕш ротăра—8 çын юлнă. Ыттисем вилсе пĕтнĕ тата аманнă. 10-мĕш танковăй дивизире пулнă 200 танкран 30—40 танк кăна тăрса юлнă. Германи войскисем Мускав патĕнче çавтери пысăк çухатусем тӳсеççĕ», тенĕ. 17-мĕш танковăй дивизири 66-мĕш зенитнăй дивизионăн 1-мĕш ротинчи обер-ефрейтор Вальтер Хермет çапла кăтартса панă: «17-мĕш танковăй дивизи хăйĕн малтан пулнă танкĕсен хисепĕнчен 50 процент ытла çухатнă. Çавăн пекех çынсем тĕлĕппе те çухатусем питех те пысăк. Сăмахран, пирĕн ротăра юлашки çапăçусенче 60 çын вилчĕ тата аманчĕ. Халиччен Мускав патăнасси çинчен тата вăрçă часах пĕтесси çинчен каласа çителĕксĕр пулсан, халĕ çав каласа никам та ĕненмест». 106-мĕш пехотнăй дивизири 240-мĕш полкри штаб ротинчен тыткăна лекнĕ Фриц Вермер çапла каласа панă: «Юлашки виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче кăна 240-мĕш пехотнăй полкра 500 çын вилчĕ тата аманчĕ. Штаб ротинче 130 çынтан 40 çын кăна тăрса юлнă. Салтаксен шухăш-кăмăлĕсем кунран-кун ытларах янăхса пыраççĕ. Нумай салтаксем чире кайнă. Германи çĕнтерессине халĕ ĕнтĕ нумайĕшĕсем ĕненме пăрахаççĕ. Вĕсем вăрçă çине тарăхаççĕ, хăвăртрах киле тавăрăнма ĕмĕтленеççĕ». 20-мĕш танковăй дивизири 50-мĕш стерлковăй полкăн 3-мĕш мотоциклетнăй ротинчи салтак Херберт Вильгельм çапла кăтартса панă: «Салтаксен шухăш-кăмăлĕсем питех те наçар. Ротăри салтаксенчен çуррине ытла тăм илсе янă тата гриппа чирленисем нумай. Салтаксем тарăхаççĕ, хăйсем вăрçа пула тарăхнине ӳççăнах палăртма тытăнаççĕ»,—тенĕ.

* * *

Чех патриочĕсем декабрĕн пуçламăшĕнче Младо-Болеславра Германи çарĕ валли хĕçпăшал тиесе ăсатма хатĕрленсе лартнă состава взрыв туса аркатнă. Юлашки вунă кун хушшинче Чехословакире, çар завочĕсемпе чугунçулсем çинче диверсилле ĕçсем тунине пула, немĕçсен 25 танкне тата 19 орудине пĕтерсе тăкнă. Чехири çар предприятийĕсем ноябрь уйăхĕнче продукци октябрьтинчен 7 процент сахалтарах туса кăларнă, тесе пĕлтереççĕ.

Декабрĕн 11-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 11-мĕш ыран тенĕ чух çĕр ле пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче противника хирĕç пынă хаяр çапăçура пирĕн боецсем немĕçсен 6 танкне, миномĕтсен 2 батарейине, 8 станковăй пулеметне пĕтерсе тăкнă тата противникăнне 21 танк тытса илнĕ.

* * *

Фронтăн Сталиногорск енче кĕрешекен Зубов майорăн гвардейски чаçĕ немĕçсене халăх пурăнакан 6 пункткран хăваласа кăларнă. Противника хирĕç çапăçса, пирĕн боецсем фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çын ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 12 автомашина, пĕр танк, 2 рации тата ытти трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче хаялла чакса пыракан немĕçсен Клейст генералăн чаçĕсем çине пирĕн партизансен отрячĕсем татти-сыпписĕр пыра-пыра тапăнаççĕ. Хула Совечĕн председателĕ В. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизанла отрядри боецсем немĕç салтакĕсем тăракан çул çинче засада тунă. Партизансен отрядĕнчи снайперсем пĕр каç хушшинче кăна 80 фашиста çити пере-пере вĕлернĕ, халăхран çаратнă япаласене турттарса каякан 8 грузовой машинăна туртса илнĕ, пĕр оруди, снарядсен темиçе ещĕкне тата винтовкăсем 100 çити тытса илнĕ. Кубань казакĕсен партизанла отрядчĕ çĕрле немĕçсен ротя çине пырса тапăннă та çав ротăна пĕр çын юлмиччен тураса вĕлерсе пĕтернĕ. Çав отрядăн командирĕ — 1914—1918 çулсенчи вăрçăра пулнă З. юлташ юлашки 5 кун хушшинче хăйĕн боецĕсене 8 хутчен атакăна илсе кайнă. Çав вăхăт хушшинче казаксем немĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 250 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ, 36 лав, 2 оруди, 7 пулемет тытса илнĕ, 40 автомашинăна çунтарса янă. Фронтăн çак участокĕнче партизансен ытти отрячĕсем те ăнăçлăн кĕрешеççĕ. Партизансен отрячĕсен командирĕсем тăшманран питех те нумай трофейăсем тытса илни çинчен, немĕçсен фашистла ирсĕрĕсене темиçе çĕршер çынна вĕлерсе пĕтерни çинчен пĕлтереççĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем хăйсем оккупациленĕ совет районĕсенче çавтери тискер ĕçсем пĕр чăнмасăр туса пыраççĕ. Ленинград облаçĕнчи Гриденка ялĕнче немĕçсем хресченсене нимĕн хăвармиччен çаратса пĕтернĕ, вĕсенчен мĕнпур апат-çимĕçсене тата тĕрлĕрен ăшă япаласене турттса илсе кайнă. Бандитсем нимĕнрен те именсе тăман — килти чăмăртиркĕсене, витресене, ачасен вылямалли япалисене пĕтĕмпех пуçтарса тухса кайнă. Фашистсен пĕр ушкăнĕ 60 çултри Сергеев старикĕн пӳртĕнче такам пăрахса хăварнă листовкăна, немĕç салтакĕсене чĕнсе калаканскерне, тупнă. Гитлеровецсем старике çавăнтах, пӳрт умĕнчех, персе пăрахнă. Ялти тепĕр çынна, Исак Григорьева, вăл немĕç салтакĕсенчен краççин лампине пытарса лартнăшăн, тăнран яриччен хĕненĕ. Çĕрле урамра немĕç офицерĕ ларса пыракан çăмăл машина чарăнса ларнă пулнă. Фашист, урамра çутă пултăр тесе, Степан Семенов колхозникăн пӳртне вут тивĕртсе янă. Заостровка ялĕнче Панвин гражданин патĕнче немĕç салтакĕсем компас тупнă пулнă. Çав компаса тытса усранăшăн Панвина йывăç çумне сыхса лартнă та тискеррĕн хĕнесе асаплантарнă. Гостибинцы ялне ирсĕр немĕçсен карательнăй отрячĕ пырса çитнĕ. Ялти çынсене пĕр урама хăваласа пухса, бандитсем ялта пытанса тăракан партизансене тупса пама хушнă. Нимĕнле ответ та илеймесĕр, офицер салтаксене çав ушкăнра тăракан мĕнпур хресченсене, вăл шутрах ачасене те, çарамаслантарма тата вĕсене патаксемпе хĕнесе пĕтерме приказ панă. Çакăн хыççăн фашистла ирсĕрсем хĕрарăмсене пысăк лакăм чавтарнă та ун пăтĕнче 13 хресчене персе пăрахнă. Замосточье ялĕнче гитлерла вăрă-хурахсем колхоз бригадирĕ патĕнче противогазăн пушă сумкине тупнă та, бригадира персе пăрахнă.

* * *

Вăтам Азире тата Закавказьере пирвăр фабрикисем валли чĕр тавар хатĕрлес ĕç пысăк ăнăçлăхпа пырать. Колхозсемпе совхозсем халиччен пулман пысăк тухăçлă çĕрмамăкĕ туса илнĕ. Узбекистанри, Таджикистанри, Азербайджанри тата ытти республикăсенчи колхозсенче стахановла пиншер звеносем кашни гектартан 50—100-шер центнер чĕрĕ çĕрмамăкĕ пухса государствăна панă. Таджик ССР-чи Сталинабад районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхозра Гафурджан Бабаев звени гектартан 100 центнер ытла чĕрĕ çĕрмамăкĕ пухса илнĕ. Çĕрмамăкĕ хатĕрлемелли çулталăк планне срокчен чылай малтан тултарнă. Киргизипе Таджикистанра колхозсем государствăна çĕнĕрен пиншер тонна чĕрĕ çĕрмамăкĕ параççĕ. Узбекистанри çĕрмамăкĕ тăвакансем çак сезонра планран ирттерсе 100 пин тонна ытла çĕрмамăкĕ пама пуласçĕ. Джамбул облаçĕнчи Луговски район çĕрмамăкĕ парас плана 305 процент тултарнă.

Халăх Хĕрлĕ Çар валли ăшă япаласем пани çинчен

Совет Союзĕнчи хуласемпе ялсенчи халăх немĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешекен Хĕрлĕ Çар боецĕсене валли ăшă тумтир пухас ĕçе питĕ анлăн хутшăнчĕ.

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çара халăх хăй ирĕкĕпе пулăшасси мĕнтери анлă сарăлса кайнине сентябрь, октябрь тата ноябрь уйăхĕсенче пана ăшă япаласен хисепĕ те лайăх кăтартса парать.

1941 çулти декабрĕн 1-мĕш тĕлне рабочисем, служащисем, колхозниксемпе интеллигенци Хĕрлĕ Çар боецĕсене валли çакăн чухлĕ япаласем пана: çăматăсем—1.174.972 мăшăр, çăм—2.767.232 килограмм кĕрĕк пиншаксем — 523.107 штука, сурăх тирĕ — 2.062.706 штука, çăм перчаткăсем, алшăсем тата тир алсасем—2.245.115 мăшăр, çăм чăлхасемпе чăлхапуççем, çăм тăласем—2.297.630 мăшăр, ăшă кĕпе-йĕм, свитерсемпе фуфайкăсем — 1.429.048 штука, мулаххайсем—1.334.360 штука, курткăсемпе ваткăллă шарфсем — 1.293.818 штука.

Кунсăр пуçне, гимнастеркăсем, мануфактура, сăран атă-пушмак т. ыт. япаласем те нумай пана. Пухăннă япаласенчен пысăк пайне действующи Хĕрлĕ Çар валли фронта ярса пана.

Хĕрлĕ Çар валли тĕрлĕ ăшă япаласене халăх халĕ те парса тăрать.

(ТАСС).

Укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене илеççĕ

ШУПАШКАР. Декабрĕн 10-мĕшĕнче Чеборгин артелĕнче пуху пулса иртрĕ. Пухура Мицина юлташ СССР Финанс Халăх Комиссариачĕ укçа-тенкĕпе япала лотерейи туса ирттерме йышăнни çинчен доклад туса пачĕ. Доклад хыççăн артель членĕсем васкасах лотерея билечĕсене илме сырăнма пуçларĕç. Иванов тата Софер юлташсем 80-шар тенкĕлĕх, Мицина юлташ 100 тенкĕлĕх, Владимирова, Архипова тата ытти юлташсем 60-шар тенкĕлĕх сырăнчĕç. Çалла вара артель членĕсем лотерея билечĕсене илме 10—15 минута хушшинчех 1.200 тенкĕлĕх сырăнчĕç. Ку ĕçе малалла туса пыма комсод уполномоченнăйне Пашунина юлташа хушнă.

* * *

Чăвашсен Государство Издательствинче ĕçлекенсем Совет Союзĕн Финанс Халăх Комиссариачĕ укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене сарас ыйтупа кĕске митинг туса ирттерчĕç. Лотерея билечĕсене сотрудниксем пурте пĕр уйăх ĕçукçинчен 20 процентран кая мар сырăнса илме сăмах пачĕç. Митинг хыççăнах 19 сотрудник, лотерея билечĕсене пурĕ 2850 тенкĕлĕх сырăнса, 655 тенкĕ çавăнтах тӳлесе татрĕç. Писатель Стихван Шавлы 300 тенкĕлĕх илме сырăнса 50 тенкине, Куçма Чулкаç 300 тенкĕлĕх илме сырăнса 200 тенкине, художник Харлампьев 300 тенкĕлĕх сырăнса 50 тенкине, редактор К. Сергеев 200 тенкĕлĕх сырăнса 50 тенкине, бухгалтер Борисюк 150 тенкĕлĕх сырăнса 50 тенкине çийĕнчех тӳлесе татрĕç.

* * *

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕнче ĕçлекен сотрудниксем укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене пурте пĕрле 2690 тенкĕлĕх сырăнчĕç. Верховный Совет Президиумĕн председателĕ З. А. Андреева 600 тенкĕлĕх, партин пуçламăш организацин секретарĕ Прохоров 230 тенкĕлĕх, Управдел Ланько 200 тенкĕлĕх, бухгалтер Иванова 100 тенкĕлĕх сырăнчĕç. Пĕр уйăхри ĕçукçи фончĕпе илсен, ку хисеп 27,4 процент пулать.

* * *

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарнатĕнчи сотрудниксем укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене митинг ирттернĕ хыççăнах 4500 тенкĕлĕх сырăнчĕç. Уйрăм сотрудниксем лотерея билечĕсене хăйсен пĕр уйăх ĕçукçинчен 27—30 процент ирттерсе сырăнаççĕ. Сăмахран, агроном Федотов 250 тенкĕлĕх, выльăх-чĕрлĕх управленин начальникĕ Степанов 200 тенкĕлĕх, ответисполнитель Герасимов 200 тенкĕлĕх тата ыттисем те чылай сырăнчĕç.

* * *

ЭЛЕК вăтам шкулĕнчи учительсем укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене 16 çын 1.010 тенкĕлĕх сырăнса илнĕ. Çавăн пекех халăх судĕнче ĕçлекенсем 170 тенкĕлĕх, перекет кассинче ĕçлекенсем 750 тенкĕлĕх сырăннă.

Районри колхозниксем те çĕнĕ лотерея билечĕсене хаваласах сырăнса илеççĕ. Ефремкасси ялсоветне кĕрекен колхоз членĕсем, 800 тенкĕлĕх сырăнса, укçине перекет кассине кайса хывнă та ĕнтĕ. Çĕнĕ лотерея билетне сырăнса илес ĕç колхозниксем хушшинче анлăн сарăлса пырать.

„Комсомол Чувашии" бронепоезда тума укçа-тенкĕ пухаççĕ

СОВЕТСКОЕ. Бронепоезд тума укçа-тенкĕ пухас ыйтăва Советски вăтам шкулĕнче сӳтсе-явса, укçа-тенкĕ пухас ĕçе тытăнчĕç. Уйрăмăнах укçа-тенкĕ пухас тĕлĕппе 7-мĕш класс малта пырать. Çав класра вĕренекенсем кашниех 3—5-шер тенкĕ параççĕ. Вĕсем ик-виç кун хушшинче 160 тенкĕ укçа пухрĕç. Уйрăм вĕренекенсем: А. Ковалев—20 тенкĕ, Г. Малинин—10 тенкĕ, Е. Никитин — 5 тенкĕ пачĕç.

Çавнашкалах Хучаш вăтам шкулĕнче те бронепоезд тума укçа пухасси аван пырать. Унта пурĕ 750 тенкĕ укçа пухнă.

В. АНДРЕЕВ

* * *

ЕТĔРНЕ. Заводри вĕренӳ пунктĕнчи боец-комсомолецсем Октябрьски районри «Большевик» промартельри комсомолецсен пуçарăвне пурте ырларĕç. А. Васильев, Н. Новиков, В. Зверев, И. Куликов, Г. Воронцов, П. Степанов комсомолецсем 20-шер тенкĕ, Андреев, Волков, Чугунов боецсем 15-шер тенкĕ пачĕç. Пĕр кун хушшинче кăла комсамолецсем 436 тенкĕ пухнă.

В. СОКОЛОВ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

НИМĔÇСЕНЕ ПОСЕЛОКРАН ХĂВАЛАСА КĂЛАРНИ

Кăнтăрла нимĕçсем К. ятлă поселок патне чакса кайрĕç. Çапăçу тамалчĕ. Пирĕн артиллери кăна хĕвеланăçнелле калкан çулсем çине персе тăрать. Халĕ эпир поселок урамĕсем хушшине шăватпăр. Тĕрĕсрех каласан, вăл урамсене нимĕç машинисемпе танкĕсен тата салтакĕсен масарĕ темелле.

Вунă кун хушши ларнă кунта тăшман. 10 кун та 10 çĕр хушши пĕр чарăнмасăр пычĕ çапăçу çак поселокшăн.

Поселок К. нимĕçсем Мускав çине ноябрьте наступлени тума тытăннă çул çинче ларать. Хăйĕн пысăк вăйĕсене çапăçăва кĕртсе янипе тăшман пирĕн войскăсене хĕссе, танксен вăйлă колоннисемпе поселока кĕрсе кайнă пулнă. Нимĕçсем кунта вут-сулăм йăвисем туса çирĕплесе ларнă. Çапла майпа вĕсем поселока пирĕн çине малалла тапăнса кĕмелли центр туса хунă. Нимĕçсем çак поселокра вырăс хĕлĕн шартлама сиввисенчен, пирĕн контратакăсенчен, артиллери снарячĕсенчен тата партизансенчен пытанса çурăнасшăн пулнă. Тăшман çĕре шăтăксем чавса, çуртсем айне пытанапытана ларнă пулнă.

Офицерсем подвалсенче, блиндажсенче пурăннă. Анчах та пирĕн пехотинецсемпе танкистсем вĕсене пĕртте канăç паман. Кăнтăрла та, çĕрле те артиллери персе тăнă. Эпир халĕ пирĕн артиллеристсен снарячĕсем мĕнтери тĕрĕс пыра-пыра тивнине куçпа курса тĕлĕнме пултаратпăр. Акă вокзал çумĕнчи вышка — йывăçран васкавлăн кăна туса лартнăскер. Кунта нимĕçсен наблюдательнăй пункчĕ пулнă. Анчах пирĕн артиллеристсем ăна тĕл персе тивретсе пĕтĕмпех ишĕлтерсе антарнă. Акă тата кирпĕч завочĕн труби. Кунта каллех нимĕç наблюдателĕ вырнаçса ларнă пулнă. Вăл пĕр кун хушши çеç ларнă. Кăсхинех вăл трубана пирĕн артиллеристсем ишĕлтерсе антарнă.

Нимĕçсем поселокран нимĕнле те тухса каясшăн мар пулчĕç. Анчах пирĕн войскăсем вĕсене нимĕн сывлама памасăр хăйсен вут-хĕмĕпе çунтарма пуçларĕç.

Пирĕн гвардеецсем тăшмана поселокран хăваласа кăларма приказ илчĕç. Декабрĕн 3-мĕш ыран тенĕ чух пехотинецсемпе танкистсем поселок патне 1 çухрăма пырса вырнаçрĕç. Нимĕçсем пирĕн çине татти-сыпписĕр пеме пуçларĕç. Ирхине пирĕн малти лини çине тăшман бомбардировщикĕсем вĕрсе килчĕç. Яра кунĕпех вĕсем пирĕн окопсем çине бомбăсем тăкса сĕрĕç, çапах та гвардеецсенчен никам та хăраса ăксе каялла чакакан пулмарĕ. Виçĕ кун иртсен пирĕн танкистсемпе пехотинецсем, артиллери хĕтĕлесе пынипе, пĕр вăхăтрах хĕвелтухăçĕнчен, кăнтăр-хĕвеланăçĕнчен тата çурçĕр-хĕвеланăçĕнчен наступлени тума пуçларĕç. Пирĕн чăссем тăшмана кĕтмен çĕртен çавтери вăйлăн пырса çапрĕç. Боецсем поселок варринчи площадь патне ыткăнса кĕрсе кайрĕç. Боецсем, тăшман вут-хĕмне пăхмасăрах, пĕр укреплени хыççăн теприне иле-иле, хăюллăн та паттăрлăн малаллах шурĕç. Тепĕр ирхине тул çутăлас умĕн, тăшман çине кĕске вăхăт хушши артиллерипе персе тăнă хыççăн, пирĕн чăссем наступлението кĕрсе кайрĕç. Поселока Елинпа Стариков командирсен боецĕсемпе Катуков командирăн танкĕсем çитсе кĕчĕç. Çапăçу икĕ сехет хушши пычĕ. Нимĕçсем, хăйсен грузовикĕсене, çĕмрĕк танкĕсене, мотоциклĕсене, темĕн чухлĕ снарячĕсемпе минисене, салтакĕсемпе офицерĕсен виллисене пăрахса хăварса, поселокран тухса тарчĕç. Тăшман, хăйĕн арьергарчĕсемпе хутĕленсе, кун каçипех чакса пычĕ. Пирĕн чăссем, ăна хыçранах хăваласа пырса, каç пулас умĕн тата икĕ пысăк ял йышăнчĕç. Нимĕçсем хăйсен вăйĕсене Ж. ятлă ялта чăмăртама пикенсе пăхрĕç. Анчах пирĕн разведчиксем ун çинчен çийĕнчех систерчĕç те, тăшманăн контратакăна хатĕрленме пуçланă пехоти çине артиллери сывлама памасăр пеме тытăнчĕ.

Вунă кун каярах тăшман ку çулпа пирĕн çине наступлени туса килнĕ. Офицерсем хăйсен салтакĕсене: «Часах Мускава çитетпĕр!» — тесе хавхалантарса пынă. Вĕсем хăйсен салтакĕсен виллисем çийĕн куçса пынă. Вĕсен çухатăвĕсем çавтери пысăк пулнă. Халĕ нимĕçсене çав çулпалах каялла чакма тивет. Вĕсен çухатăвĕсем халĕ те питĕ пысăк. Çĕнĕ юр Гитлер вилĕм çине хăваласа кĕртсе янă çынсен юнĕпе хĕрелсе кайнă. Çамрăк юрпа витĕннĕ çулсем пĕтĕмĕшпех этем юнĕпе хĕрелеççĕ, ăçта пăхнă унта çын виллисем йăваланса выртаççĕ.

Акă тăкăрлăкри пĕр станковăй пулемет çумĕнче икĕ нимĕç салтакĕ хутланса лараççĕ. Иккĕшĕ те вилнĕ. Вĕсем пĕр-пĕрин çумне чăмăртаннă. Врач çав салтаксен ăçĕ çинче нимĕнле суран та тупаймасть. «Ку салтаксем шăнса вилнĕ», — тет вăл.

Пирĕн тракторсем нимĕçсен персе çĕмĕрнĕ танкĕсене буксир çине илсе пыма сĕтĕрсе тухаççĕ, грузовиксем мотоциклсем турттараççĕ. Çул хĕррипе канавсенче айăн-çийĕн ăпĕнсе кайнă грузовиксем йăваланса выртаççĕ, машинăсем айĕнче — нимĕç салтакĕсен виллисем.

Питех те хакла ларнă иккен нимĕçсене К. патне илсе пыракан çул!

Пирĕн чăссем поселок урамĕсем тăрăх утаççĕ. Вĕсем нумаях пулмасть тăшман минисенчен сыхланса хырăмпа шуса пынă вырăнсенче халĕ хăюлланах утаççĕ. Çапăçу икĕ талăк хушши пынă пулин те, вĕсем лăпкăн, хăйсен вăйĕсене шанса, нимĕн ывăннине те сисмесĕр утаççĕ.

Нимĕçсем каялла чакрĕç. Вĕсем чакнă-чакманах вĕсен тылне паттăр саперсем кĕрсе кайрĕç. Саперсене сержант Николай Дудлицкий ертсе кайрĕ.

Саперсене çапла задани панă: тăшман автоматчикĕсем кĕрсе ларнă сарая вут тивретсе çунтарса ямалла. Пирĕн саперсем, вуниккĕн, фронт линийĕ урлă каçса, сарайсем патне шуса пычĕç те вĕсене пур енчен те хупăрласа илсе вут тивретсе ячĕç. Автоматчиксем, вут сулăмĕ хушшинчен сике-сике тухса, тарса хăтăлма пикенчĕç. Николай Дублицкий вĕсене пурне те ручной пулсметран пере-пере вĕлерсе тăкрĕ.

Саперсем калла тавăрăнса боевой задание пурнăçлани çинчен рапортларĕç. Анчах вĕсен пичĕсем хуйхăпа салхуланнă, мĕншĕн тесен çĕнтерӳ пулни çинчен калакан ырă хыпарпа пĕрлех вĕсем хăйсен паттăр командирĕн, Николай Дублицкий сержантăн виллине илсе килчĕç. Ăна фронт линийĕ урлă каçнă чухнехи хаяр çапăçура нимĕçсем хупăрласа илнĕ. Вăл парăнман, тăшмана хирĕç юлашки юн тумламĕ юлмиччен, юлашки граната юлмиччене çапăçнă, анчах хăй те йывăрран аманса геройла вилĕмпе вилнĕ. Саперсем ун ӳтне çапăçу пыракан зонăн тулашне илсе тухрĕç.

Çапла хăйсен пурнăçĕсене шеллемесĕр çапăçаççĕ Мускав патĕнче пирĕн гвардеецсем.

О. КУРГАНОВ.

(«Правда», 1941 çулти декабрĕн 10-мĕш).

Румыни хулисем аманнă нимĕç салтакĕсемпе тулса ларнă

СТАМБУЛ, декабрĕн 10-мĕш. Бухарестран килнĕ çынсем çапла пĕлтереççĕ: Румыни власĕсем Германи командованийĕнчен аманнă нимĕç салтакĕсене Хĕвелтухăç фронтĕнчен Румыние урăх яма кирлĕ мар тесе ыйтнă. Хальхи вăхăтра госпитальсем кăна мар, частнăй çуртсем те Германин аманнă салтакĕсемпе тулса ларнă.

Италире фашизма хирĕçле вăрттăн ĕçлекен радиостанци каласа

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 10-мĕш. (ТАСС). «Колумбия Бордкастинг» ятлă радио саракан компани, Италирен фашизма хирĕçле вăрттăн ĕçлекен радиостанци кĕске вăхăт çинче каласа пынине итленĕ, тесе пĕлтерет. Вăрттăн ĕçлекен çак радиостанци хăйĕн передачинче, Триестра Италири антифашистсене суд тунă çинчен каланă май, Триестра пурăнакан халăх фашизмпа нацизма кăмăлламасть, тесе пĕлтернĕ. Радиостанци мĕнпур итальянецсене фашизма хирĕç кĕрешмешкĕн пĕрлешме чĕннĕ. «Эпир, Триест хулинчи мĕнпур граждансем,— терĕ передачăра,—çак вăрçăра Германи çĕнтерес пулсан, Италия тата мĕнпур Европа мăн тери никеке кĕрсе ӳкессине ăнланатпăр».

Норвегире Германие хирĕç саботаж тунă

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 10-мĕш. (ТАСС) Хамара хулинче (Норвегире) гостиницăпа хăма çуракан завода вут тивретсе çунтарса янă. Корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, гостиницăра квислинговецсем пурăннă пулнă.

Норвеги правительствин представителĕ пĕлтернĕ тăрăх, юлашки 4 уйăх хушшинче Норвегире гестапо штатне самаях ӳстернĕ.

Югославири çапăçусем

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 10-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Анкарари корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Югославири партизансен войскисем, Михайлович командир пулса ертсе пынипе, Ужицы районĕнче Германин 9 танкне, 3 бронемашинине пĕтерсе тăкса, нимĕçсене Чачак патнелле хăваласа янă. Прокупьерен (Кăнтăрти Сербия) инçех те мар партизансем Германин моторизованнăй колонни çине пырса тапăннă та пехотăн пĕр батальонне яхăн пĕтерсе тăкнă. Илнă сведенисем тăрăх, Германин Недич ертсе пыракан танкĕсемпе отрячĕсем Голубац (Хĕвелтухăç Сербри) çине тунă атакăна Сербри партизанĕсем сирсе пăрахнă. Нимĕçсен Салоникинне, Варнăна тата Бургаса çар турттарса каякан чугунçул составĕсем умĕн бронепоездсем яма тивет.

Тобрука хӳтĕлекенсем Югослави партизанĕсен саламĕ çине пана ответ

ЛОНДОН, декабрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин Каирти корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Тобрукри гарнизон командирĕ Серби партизанĕсен çарĕн командующийĕ Михайлович янă телеграмма çине ответ панă. «Эпир,— терĕ ответра,—сирĕн послание пысăкăн хаклатпăр тата эпир шанса тăнă пекех, эпир те тăшмала çĕнтерессине шанса тăратпăр. Тобрука хӳтĕлекенсем, хĕçпăшал тĕлĕшпе сирĕн юлташсем пулса тăнăскерсем, Югослави çарне саламлаççĕ. Сирĕн кĕрешӳри хăюлăх пире хавхалантарать тата пирĕн чĕресене паттăрлăх кӳрет».

Йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕ пулса иртрĕ

ИШЛЕЙ. Ишекри «Большевик» промартельри комсомолецсем пуçарнипе колхозри çамрăксемпе шкулта вĕренекенсем нумаях пулмасть йĕлтĕрлĕ ăмăрту туса иртернĕ. Ăмăртăва пурĕ 29 çамрăк хутшăннă, вĕсенчен—13-шĕ комсомолецсем.

Арçынсем 5 километрлă дистанци илнĕ. Çав дистанцине Т. Васильев, 26 минута та 03 секундăра тухса, ăмăртура пĕрремĕш вырăн йышăннă. Ун хыççăн 26 минута та 21 секундăран Осоавиахимăн шкулти пуçламăш организацин председательĕ Б. Иванов çитнĕ. 3-мĕш, 4-мĕш, 5-мĕш вырăнсене Л. Смирнов, А. Арбатов, И. Илохина комсомолецсем йышăннă.

Ăмăртура хĕрачăсем те пулнă. Вĕсем 3 километрлă дистанцине кайса килнĕ. Чи малтан, 16 минута та 32 секундăра Т. Кудрявцева çитнĕ, ăмăртура пĕрремĕш вырăн йышăннă. Унтан иккĕмĕш, 17 минута та 04 секундăра Е. Добросмыслова тухнă. В. Кудрявцева виççĕмĕш вырăн йышăннă. Вăл 3 километра 17 минута та 38 секундăра кайса килнĕ.

Çамрăксем ăмăртупа пит кăмăллă юлчĕç. Çавăн пек ăмăртусене канмалли кунсенче час-часах туса иртерме килĕшрĕç.

И. МАРКОВ.

Пирĕн чăссем рубежсене çирĕп тытса тăраççĕ

КĂНТĂР ФРОНЧĔ, декабрĕн 10-мĕш. (**«Правда» хаçатăн спецвоенкорĕ**). Нимĕç генералĕн Шведлерăн чăсĕсем темиçе кун хушши ĕнтĕ пирĕн оборонăн начартарах вырăнĕсене шыраса тупма хăтланаççĕ, тĕрлĕ участоксенче атакăна кĕрсе каяççĕ, анчах ниçта та ăнăçлă ĕç тăваймаççĕ. Н. Станцишĕн тата ун çумĕнчи районшăн пыракан çапăçу нимĕçсен 111-мĕш дивизин 50-мĕш полкне арканса тăкнипе вĕçленчĕ.

Пирĕн чăссем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна пĕтерсе тăкрĕç. Вĕсем, пирĕн тупăсенчен çавтери вăйлăн персе тăнипе пăхмасăрах, станци патне татса кĕрсе станцине тытса илме хăтланса пăхрĕç. Ĕнер тăшмана пысăк çухатусем кӳрсе каялла хăваласа янă. Çак çапăçусенче пĕр подразделенин политрукĕ Лавров юлташ хăйĕн пысăк паттăрлăхне кăтартрĕ. Вăл боецсене хăй хыççăн ертсе кайса темиçе хутчен атакăна кĕрсе тухрĕ, штыкпа тăрса çапăçлă чухне 20 фашиста хăй штыкпа чикрĕ пăрахрĕ. Старший сержант Каменев тăшмана çывăхах пыма ирĕк панă те, унтан пулеметран персе нимĕçсен взводне пĕтерсе тăкрĕ. Звягин пулеметчик 20 фашиста персе пăрахрĕ.

Ĕнер çĕрле пирĕн пĕр полкăн истребительнăй отрячĕ тăшманăн тылĕнчи О. пункт патне кĕрсе кайрĕ те, 100 итальянеца пĕтерсе тăкса, нимĕн çухату тумасăрах каялла тавăрăнчĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче Р. салинĕн пынă çапăçу вăхăтĕнче танк командирĕ кĕçĕн лейтенант Фоменко юлташ тăшман оборонин малти хĕррине татса кĕрсе, тăшманăн 4 противотанковăй туппине, 6 автомашинине пĕтерсе тăкнă, пехотăн пĕр ротине яхăн сапаласа янă. Каялла тавăрăннă чухне Фоменко юлташ тăшманăн горючи тултарнă 3 автоцистернине пĕтерсе тăкнă, 9 нимĕçе таптаса вĕлернĕ те хăйĕн чăсĕ тăнă вырăна тĕрĕс-тĕкĕлех çитнĕ.

М. МЕРЖАНОВ.

Фашистсен чăсĕсене пырса çапни

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, декабрĕн 8-мĕш. (**Телефон тăрăх**). Мускав патне пымалли инçетри вырăнсенчен пĕринче Мишулин юлташăн чăсĕсем тăшмана хирĕç ăнăçлă атакăсем тунă. Çав çапăçусенче тăшманăн М. районĕнчи чăсĕсене пĕтĕмĕшпех çапса аркатнă тата тăшманăн вăйĕсене ытти чылай пунктсенчен хĕссе кăларнă. Çак çапăçура нимĕçсен 800 çын вилнĕ.

Пирĕн чăссем вăйлăн хĕссе пынипе каялла чакакан тăшман çапăçу хирне çар пурлăхĕпе снаряженисем нумай пăрахса хăварнă, вăл шутра: 16 оруди, 60 грузовой автомашина, 3 çăмăл машина, документсем илсе пыракан штаб машини, 20 мотоцикл тата боеприпассемпе ытти материалсем нумай.

(«ПРАВДА», декабрĕн 9-мĕш).

Лăпкă океанри вăрçă

ЛОНДОН, декабрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин çапла пĕлтерет: США-н çар министерстви аманнисемпе вилнисен малтанхи списокне пичетлесе кăларнă. Çак списока Гавай утравĕсенче вилнĕ офицерсемпе салтаксен 37 çынăн ятне кĕртнĕ.

Манилăран официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Японин çĕр çинчи вăйĕсем, çар суднисем тата авиаци пулăшса пынипе, Лусон утравĕн çурçĕрти пайне хăватлăн атакăланă.

Çав агентствах çапла пĕлтерет: декабрĕн 9-мĕшĕнче ирхине 3 сехетре Япони самолечĕсем Манила хулин тулашне, аэродромсем вырнаçнă çĕре, бомбăсем пăрахнă.

Çар командованийĕн представителĕ, декабрĕн 8-мĕшĕнче Филиппинсенче самолетсем икĕ ечен те чылаях пĕтнĕ, тесе пĕлтерет.

Ĕнер Сингапура Голландин Хĕвелтухăç Индирен тинĕс-çар вăйĕсем тата авиаци килсе çитнĕ.

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 9-мĕш. (ТАСС). Тинĕс-Çар вăйĕсен представителĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Гуам утравĕ çинче граждăнла халăхсем тата моряксем хушшинче аманнисемпе вилнисем нумай. Хăшпĕр çуртсене сиенленĕ.

Малай сыранĕнчен çурçĕр енче Америка самолечĕсем Япони транспортчĕсем çине пырса тапăннă. Бомбăсем икĕ транспорт çине тĕл ӳкнине палăртнă, çав транспортсем çинче Япони войскисем пулнă. Пĕр бомба Япони салтакĕсене лартса илсе пыракан баржа çине ӳкнĕ.

Сан-Францискăра, Японин 50 самолечĕ сывхарса килнĕ май, сывлăшри тревога çинчен пĕлтернĕ.

Сингапур çине сывлăшран пырса тапăннине пула унта 53 çын вилнĕ тата 133 çын аманнă.

ТОКИО, декабрĕн 9-мĕш. (ТАСС). Домей Цусин агентстви çапла пĕлтерет: Япони авиацийĕ Англин Малайăри авиаци базисем çине тапăнса, Англин темиçе самолетне пĕтерсе тăкнă. Çавăн пекех Манила таврашне тата Манилăран çурçĕр-хĕвеланăçнерех вырнаçнă Аиба хули çине бомбăсем пăрахнă. Японин çар карапĕсем ĕнер кăнтăрла иртсен Мидуэл утравĕ çине бомбăсем пăрахнă. Япони авиацийĕ Гавай утравĕсем çине тапăнса, Америкăн темиçе линкорĕсемпе крейсерĕсене сиенлени çинчен те пĕлтереççĕ.

РУЗВЕЛЬТАН ПРИКАЗĔ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Германипе Итали гражданĕсене тăшман пулса тăракан ютçĕршыв çыннисем тесе шутлама Америкăн ăслăçсене Рузвельт приказ панă. Германипе Италия Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене тапăнса кĕрессипе хăратса тăраççĕ, тенĕ Рузвельт.

САН-ДОМИНГО, ГВАТЕМАЛА ТАТА КУБА ПРАВИТЕЛЬСТВИСЕМ ЯПОНИЕ ХИРĔÇ ВĂРÇА ПУÇЛАНИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНĔ

ЛОНДОН, декабрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Сан-Доминго, Гватемала тата Куба правительствисем Японие хирĕç вăрçа пуçлани çинчен пĕлтернĕ.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЕНЧИ ПĔТĔМĔШЛĔ МОБИЛИЗАЦИ

ЛОНДОН, декабрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Голланди Индине çинче пĕтĕмĕшлĕ мобилизаци пуçланă.

МЕКСИКА ХАЙĔН ВОЙСКИСЕНЕ КАНТĂР КАЛИФОРНИНЕ КУÇАРАТЬ

ЛОНДОН, декабрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Мексикан Кантăр Калифорнийĕнчи гарнизонĕсене тĕреклетмешкĕн Мексикăна хăйĕн войскисене Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен территорийĕ урлă илсе кайма ирĕк панă. Мексика войскисем Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен территорийĕ урлă ĕнер куçма пуçланă.

АНГЛИ САМОЛЕЧĔСЕМ ПАТРУЛЬРЕ СУРЕÇÇĔ

ЛОНДОН, декабрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем патĕнчен пуçласа 500 миль инçете тăсăлакан вырăнсенче Англи самолечĕсем патруль туса çӳреме тытăннă. Çав районсенче Японин темиçе подводнăй лодки пур тесе пĕлтереççĕ.

ЯПОНИ ВОЙСКИСЕМ ДЕСАНТ АНТАРНĂ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Манилăран (Филиппинсен утравĕсем) пĕлтернĕ тăрăх, Япони войскисем Уитсон утравĕн çурçĕр тата хĕвеланăç сыранĕсенчи икĕ пункта десант антарнă.

„Принц Уельсский“ линкора тата „Ритао“ линейнăй крейсера путарни

ЛОНДОН, декабрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Англин тинĕс министерстви коммуникке пичетлесе кăларнă. Коммуникере çапла каланă: «Принц Уельсский» линкора тата «Ритао» линейнăй крейсера путарни çинчен Сингапуртан илнĕ ырăпар пирки тинĕс министерстви хурланса пĕлтерет. «Ритао» линейнăй крейсер çинче Кингст адмиралăн ялавĕ пулнă. Линкорпа крейсера, вĕсем Малайă çине Япония пырса тапăннине сирсе ярас тĕлĕшпе операцисем тунă чухне, путарнă. Министерство аллинче. Япони командованийĕ официальнăй йĕркепе кăларнă коммуникесĕр пуçне, тĕплĕ материал урăх çук. Японецсен коммуникинче çав икĕ карапа та сывлăшран пырса тапăнса путарни çинчен каланă.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: «Принц Уельсский» линкор — «Король Ӳ» линкорпа пĕр йышши карап пулнă. Унăн водоизмещенийĕ — 35 пин тоннăна яхăн. Çав карапа техникăн юлашки çитĕнĕвĕсене шута илсе тунă тата ун çинче нумай тĕрлĕ секретлă хĕçпăшал пулнă, тесе пĕлтереççĕ. Ана виççĕ башня çине вырнаçтарса лартнă 14 дюймлă орудисемпе хĕçпăшаллантарнă пулнă. Линкора 16 дюймлă тĕреклĕ броняпа витнĕ пулнă. Карапăн хăвăртлăхĕ — 30 узела яхăн. «Ритао» карап — «Ринао» класĕнчи крейсер. Унăн водоизмещенийĕ — 30 пин тонна. Ана 1913 çулта тунă, 1932—36 çулсенче чылай çĕнетнĕ. Карапăн экипажĕ 1.200 çынтан тăнă. Ана 15 дюймлă ултă орудипе хĕçпăшаллантарнă пулнă. Карап хăйĕн борчĕ çинче темиçе самолет илсе çӳренĕ. Карапăн хăвăртлăхĕ — 29 узел пулнă.

Англин авиаци министерстви кăларнă коммюнике

ЛОНДОН, декабрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Авиаци министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: ĕнер кăнтăрла Англи çыранри оборонăн самолечĕсем Голланди çыранĕн çывăхĕнче противникăн хуралпа пыракан пысăк суднине атакăланă. Бомбăсем ӳкнипе суднăна вут тивретсе янă. Çавăн пекех Англи самолечĕсем Норвеги çыранĕ патĕнче противникăн тепĕр суднине атакăланă. Англин истребительĕсем, Çурçĕр Франципе разведка туса, промышленность предприятийĕсене атакăланă тата вĕсене вăйлăн сиенленĕ.

Ливири положени

ЛОНДОН, декабрĕн 10-мĕш. (ТАСС). «Дейли экспресс» хаçатăн çар корреспонденчĕ çапла çырать: Англи войскисем, ăнăçлă маневрсем тунă хыççăн, татах лайăх позицисем йышăннă. Йышăннă çĕнĕ позицисем патне артиллери нумай илсе пынă. Çак артиллери халĕ противникăн пĕр пĕчĕк района пухăннă мотомеханизированнăй мĕнпур чăсĕсем çине тенĕ пекех персе тăрать. Англин артиллерийĕ противника виçĕ енчен персе тăрать, çав вăхăтрах Англин çăмăл танкĕсем вĕсем çине флангсенчен тăтăшах пыра-пыра тапăнаççĕ. Çакнашал положени, юлашкинчен, Германин бронетанковăй чăсĕсене пĕтерсе хума пултарать.

Канадăра çар суднисем чылай туса кăлараççĕ

ЛОНДОН, декабрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: Канадăран илнĕ сведенисем тăрăх, правительство 17 корвет тума 25 миллион даллартăх заказсем вырнаçтарса тухнă. Çак суднăсене тунă суднăсен строительствин пĕтĕмĕшле планĕн пĕр пайĕ кăна пулса тăрать. Çав план тăрăх вĕсене 1943 çулти никĕсĕм çур çулччен туса çитерме палăртнă, кунсăр пуçне тата 38 корвет, 25 миннăй тральщикпа 16 тральщик тума пăхнă.

Парижри йывăр лару-тăру

ЖЕНЕВА, декабрĕн 10-мĕш. Декабрĕн 6-мĕшпе 7-мĕшĕнче Парижра Германи салтакĕсем çине татах та тепĕр хут тапăннă. Çавна пула, тесе пĕлтерет Гермали информаци бюровĕ, Париж хулин комендантĕ çакăн пек распоряжени кăларнă: декабрĕн 6-мĕшĕнчен пуçласа мĕнпур ресторансем, кинотеатрсемпе театрсем 17 сехетре ĕçлеме пăрахса, хупăнмалла. Сена департаментĕнчи халăхсене 18 сехетрен пуçласа 5 сехете çитиччен урама тухма чараççĕ, метрополитен тата ытти çыхăну средствисем, инçете çӳрекен поездсемсĕр пуçне, ĕçлеме чарăнаççĕ. Çав правилăсене пăсакансене айăплаççĕ.

Чайковский произведенисенчен Америкăра туса иртернĕ концерт

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Лос-Анжелосран пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри палламан кино-актерсем, пысăк ученăйсем, журналистсем тата ытти обществăллă деятельсем Лос-Анжелосра Чайковский произведенийĕсенчен пысăк концерт организациленĕ. Концертран пухнă уçка-тенке врăссене вăрçăра пулăшу парас тĕлĕшпе ĕçлекен Кăнтăр Калифорнири ассоциацине панă. Концерт итлеме Лос-Анжелосри çавтери пысăк зала 3.500 çын ытла пухăннă пулнă. Американ пичет конференцийĕсем те ăнăçлăн пулса иртнине палламалла тăвать.

Турципе Болгари чиккинчи çар строительстви

АНКАРА, декабрĕн 8-мĕш. (ТАСС). Турцирен пĕлтернĕ тăрăх, Турципе Болгари чиккинчи кĕперсене çыхасси Германирен строительство материалĕсем турттарса килекен поезда Югослави партизанĕсем тăвайккинчен ӳпĕнтерсе янă пирки тытăнса тăрать.

—○—

Комсомол активĕн пухăвĕ

Декабрĕн 9-мĕшĕнче, Шупашкарта комсомолăн хулари активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ Романова юлташ Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă докладпа лартнă задачăсем çинчен каласа панă.

Сталин юлташ доклачĕ хулари ĕçсыннисен ĕçри хастарлăхне ӳстерчĕ, çĕнĕ вăй панă. Комсомолăн нумай организацийĕсем Сталин юлташăн докладне сӳтсе-явнă хыççăн татăклă обязательствăсем илчĕç. Халĕ çав обязательствăсене вĕсем чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Ленин ячĕпе тăракан фабрика, типографи тата «Молот» артель ноябрь уйăхĕнчи производство планĕсене ытлашшипех тултарчĕç. Çав предприятисенче комсомолăн пуçламăш организацийĕсем пример кăтартса ĕçлерĕç. Ленин ячĕпе тăракан фабрикăра стахановецсемпе ударниксем пучĕ чылаях ӳсрĕ. Хальхи вăхăтра вĕсем 64 çын шутланаççĕ. Ноябрь уйăхĕнчи плана 102 процент тултарнă. Столярова, Григорьева, Маркова, Христофорова комсомолкăсем хăйсен нормисене ытлашшипех тултарса ĕçлеççĕ. Пуçламăш организацинчи пур комсомолецсем те оборона значокĕсен нормисене панă. Комсомолецсемпе çамрăксем хушшинче «Комсомол Чувашни» бронепоезда тума 1500 тенкĕ укçа пухнă.

Сталин юлташ лартнă задачăсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе комсомолăн государство банкĕнчи, çыхăну конторинчи, Водосветри, Промсоюзри тата пир-авăр фабрикинчи пуçламăш организацийĕсем паха ĕçсем тунă.

Анчах, комсомолăн уйрăм организацийĕсем халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ лартнă задачăсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе начартарах ĕçлеççĕ-ха. «Красный мебельщик» тата «Кооператор» артельсенчи комсомолецсем ку вăхăтченех кивĕлле ĕçлеççĕ, производствăлла программăна тултарассишĕн, спецзаказсене вăхăтра пурнăçлассишĕн начар кĕрешеççĕ. Комсомолецсем производствăра пример кăтартмаççĕ.

Пренире тухса калакансем комсомолăн шкулсенчи пуçламăш организацийĕсем вĕренӳ пахалăхĕшĕн, вĕренӳри дисциплинăна çирĕплэтессишĕн çителĕксĕр кĕрешнине палăртрĕç.

Комсомол активĕн пухăвĕ, Сталин юлташ лартнă задачăсене йĕркеллĕ пурнăçа кĕртсе пыма пулса, тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Аван çапса пĕтернĕ

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклада сӳтсе-явнă хыççăн, Урапакассинчи (Етĕрне р.) «Правда» колхозăн членĕсем кĕске вăхăтрах аван çапса пĕтерме, государство умĕнчи обязательствăсене тултарма тата фронта пулăшассине вăйлатма обязательство илнĕ.

Çĕрле те, кăнтăрла та итем çинче молотилка шавĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем, ваттисенчен пуçласа çамрăккисем патне çитичченех, итем çинче ывăнма пĕлмесĕр аван çапнă. Çапнă тырра итем çинчех сортласа тасатса склада туртарнă, улăмсене купаланă. Юр çуса тăни колхозниксене чăрмантарман, мĕншĕн тесен вĕсем витнĕ итемсем çинче ĕçленĕ.

Ăмăртса ĕçленине пула ноябрĕн юлашки кунĕсенче 2-мĕш бригада аван çапса пĕтерчĕ, тепĕр-ик кунтан ытти бригадăсем те аван çапса тирпейлерĕç. Çапла колхоз аван ĕçне вĕçлерĕ, государство умĕнчи мĕнпур обязательствăсене тултарчĕ, халĕ обществăллă фондсем тума тытăнчĕ.

В. ЛАЗАРЕВ.

Ответлă редакторшăн А. А. ЭСХЕЛЬ.

ТРЕБУЮТСЯ

химик-специалист

по анализу черных и цветных металлов и

сторож

Обращаться по адресу: Ленинградская, 38 5—4

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—83, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 7372

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 651. Ф б. 58 84 п. л.